25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 ИЮЛЬ 16 КĔÇНЕРНИКУН 164(6099) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Ялти политикăллă агитацин задачисем

Çĕршыв тырпулсене пухса кĕртмешкĕн уйхире тухма хатĕрленет. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» постановлени кăларчĕç. Çав постановленире тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес, уборкăна ирттерес, авăн çапас, тырпулсене турттарас, ялхуçалăх продукчĕсене государствăна парса татас ĕçсене мĕнле туса пымаллине питех те тĕплĕн кăтартса панă.

Хальхи вăхăтра ялти коммунистсен, комсомолецсен, колхозниксемпе колхозницăсен, совхозсемпе МТС-сенчи рабочисемпе специалистсен пархатарлă та хисеплĕ задачи—уборкăна лайăх хатĕрленес, ăнăçлăн ирттерес, государство умĕнчи обязательствăсене тултарас ĕçсене вăхăтра пурнăçа кĕртесси пулса тăрать.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленине ĕççыннисем патне çитерниччен, çавна кашни колхозникпе колхозница, совхозсенчи тата МТС-сенчи кашни рабочипе работница тата служащи тĕплĕн ăнланса илниччен пирĕн ĕçсем ăнăçлăн пулса пырасси килет. Çак постановленине партипе комсомолăн ялти организацийĕсен пухăвĕсенче, колхозниксен, совхозсемпе МТС-сенчи рабочисен, специалистсемпе служащисен пухăвĕсенче сÿтсе-явса, уборкăна хатĕрленес, [illegible]

[illegible]

Агитаторсен, калаçу ирттерекенсен тата вулакансен ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленине кашни колхозра, кашни звенора, кашни колхозникпе колхозницăна, совхозсемпе МТС-сенчи рабочисене тĕплĕн ăнлантарса пама тăрăшмалла. Ялхуçалăхĕнче ĕçлекен кашни çын çакна лайăх ăнланса илтĕр: эпир уборкăна мĕн чухлĕ ăнăçлăрах ирттеретпĕр, государство умĕнчи обязательствăсене мĕн чухлĕ вăхăтра пурнăçа кĕртетпĕр, çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли çавăн чухлĕ нумайрах апат-çимĕç атта чĕртавар пама пултаратпăр, тăшмана аркатса тăкас ĕçе хăвăртрах туса çитерме пулăшатпăр.

Ялти массăсем хушшинчи агитаци кăçал уборкăра нихăçанхинчен тимлĕрех пулса пымалла, вăл кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме кирлине, ĕç вăхăчĕпе туллин усă курма, рабочисен горючисене перекетлеме кирлине ăнлантарса парас енĕпе пулса пымалла. Агитаци ĕçне кашни кунах туса пырса, колхозсенчи мĕнпур халăха, вăл шутра ачасемпе ватă стариксене те, тырпулсене пухса кĕртсе ĕçре пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеме явăçтармалла.

Агитаци витĕмлĕ пултăр тесен, агитаторăн сăмахпа каланисĕр пуçне, хăйĕн производствăра лайăх ĕçлесе ытти колхозниксене пример кăтартас пулать. Ялти активист производствăра ĕç нормисене ирттерсе тултарса пыни, ĕçе тĕплĕн туни—ыттисене те çавăн пек ĕçлеме чĕнни пулать. Ăна кура бригадăри, звенори колхозниксем ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пырĕç, тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕртме тăрăшĕç.

Агитациллĕ ĕçе уйхире, итемсем çине, тырпула пухса кĕртес тĕлĕшпе ĕçленĕ çĕре куçарас пулать. Кашни бригадăра, звенора, трактор бригадинче агитатор пултăр.

Агитатор партипе правительство решенийĕсене ăнлантарса парас ĕçе массăсем хушшинче пĕрмаях, тата тимлĕн туса пыма, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене тата хаçатсенчи çĕнĕ хыпарсене кашни кунах каласа кăтартма тивĕçлĕ. Çавăнпа пĕрлех агитаторăн малта пыракан колхозниксен ĕçри опычĕсене ытти колхозниксене каласа кăтартасси, вĕсене ĕçри лайăх опытсемпе усă курма вĕрентесси çинчен манма юрамасть.

Массăсем хушшинче ăнлантару ĕçне туса пыма ĕçĕн тĕрлĕ формисемпе усă курас пулать. Колхозниксем тата совхозсемпе МТС-сенчи рабочисем хушшинче уборкăна ирттересси çинчен докладсем туса памалла, [illegible] радио итлес тата кино кăтартас ĕçе организацилемелле.

Чылай агитколлективсем [illegible] Сăмахран, Патреклĕнчи (Елчĕк р.) агитаторсем [illegible]

ВКП(б) райкомĕсен уборкăна тухас умĕн агитаторсен семинарĕсене ирттермелле. Кашни агитатор хăйĕн умĕнче мĕнле задачăсем тăнине пĕлсе тăтăр, докладсем тума, калаçусем иртерме лайăх хатĕрлентĕр. Халиччен практикăран çакă курăнать: хăшпĕр çĕрте агитаторсем мар, агитколлектив руководителĕсем те республикăри хаçатсене илсе тăмаççĕ. Сăмахран, Елчĕк районĕнчи Эйпеçри агитколлективăн руководителĕ Емельянов районри хаçатсăр пуçне нимĕнле хаçат та илмест. Паллах, ку вăра агитациллĕ ĕçе кирлĕ пек туса пырассинче пысăк чăрмав пулса тăрать. Парти райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен агитколлектив руководителĕсемпе агитаторсене кирлĕ хаçатсемпе журналсене тупма пулăшас пулать.

Большевикла агитацие анлăн туса пырса колхозсенче, совхозсенче тата МТС-сенче социализмлă ăмăртса ĕçлессине вăйлатмалла, ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пымалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 14-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июлĕн 14-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникăн Воронеж районне татса кĕнĕ группировкине хирĕç хаяррăн çапăçнă.

Богучартан кăнтăр енчи районра пирĕн войскăсем противникăн наступлени тăвакан танкĕсемпе мотопехотине хирĕç йывăр çапăçусем туса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусем пулман.

* * *

Июлĕн 13-мĕшĕнче пирĕн авиаци частĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 64 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 165 автомашинине, 5 орудине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен склачĕпе горючи складне сирпĕнтерсе янă, чугунчусинчи 2 эшелона çунтарса янă, противникăн пехотине виçĕ батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче çапăçусем питех те хаяррăн пулса пыраççĕ. Нимĕçсем çав участокра мĕн чухлĕ çухату тÿсни çинчен пирĕн пĕр соединени çапăçнин результачĕсем тăрăх пĕлме пулать. Çав соединени йышăнса тăракан участокра 10 кун хушшинче нимĕçсен 35.000 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ тата аманнă. Кунсăр пуçне, пирĕн соединенин войскисем 135 полевой тата 106 противотанковăй оруди, 157 танк, 100 сатанковăй пулемет, 11 бронемашина, груз тиенĕ 115 автомашина тата 220 лав пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн боецсем тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕрте çирĕплĕхпе хастарлăх кăтартаççĕ. Портивотанковăй пăшалăн наводчикĕ Сметанко юлташ противникăн пĕр танкне вут тивертсе янă. Нимĕçсем часах атакăна тата 4 танк кĕртсе янă. Сметанко вĕсем çине пеме тытăннă та, тÿрĕ лектерсе, малта пыракан танка вут тивертнĕ. Ытти танксем вара каялла çавăрăнса кайнă. Пулеметчик Сидоров юлташ хăйĕн роти каялла чакнине хÿтĕлесе тăнă чухне йывăр аманнă пулнă. Гитлеровецсем пулеметчика çавăрса илнĕ те ăна тыткăна илме хăтланнă. Сидоров юлташ, юлашки вăйĕсене пухса, 2 противотанковăй граната ывăтнă та нимĕçсен 20 салтакне ытла пĕтерсе тăкнă. Хăйĕн гранатипе вăл хăйне тата хăйĕн пулеметне сирпĕнтерсе янă. Старши сержант Фольгинскăй командир пулса ертсе пыракан автоматчиксен взвочĕ, танксем çине ларса, нимĕçсен йышлă тăракан Е. ялне çĕмĕрсе кĕнĕ. Урамра çапăçу пуçланса кайнă. Танксем пулăшнипе пирĕн автоматчиксем противникăн çав ялтан хĕсерсе кăларнă.

* * *

Богучартан кăнтăртарах районра пирĕн чаçсем противникăн йышлăрах танкĕсемпе мотопехотине хирĕç йывăр çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра совет войскисене çавăрса илес хăрушлăх тухса тăнă. Пирĕн танкистсем противникăн мала кĕрсе кайнă войскисене флангран пырса çапса татса илнĕ те пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсен 17 танк тата 900 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ. Нимĕçсем çапăçăва хăйсен резервĕсене кĕртсен тин пирĕн боецсем оборонăн çĕнĕ рубежĕ патне чакнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен пехоти танксем пулăшнипе пирĕн пĕр чаçа атакăланă. Совет артиллерисчĕсемпе бронебойщикĕсем нимĕçсен 12 танкне пĕтерсе тăкнă. Противникăн пехоти, пысăк çухатусем тÿссе, каялла чакнă. Пирĕн боецсем, гитлеровецсене хăваласа пырса, халăх пурăнакан пунктăн хĕррине çĕмĕрсе кĕнĕ.

* * *

Старши лейтенант Кикоть, старшина Попов тата старши сержант Баранов ларса пыракан танк экипажĕ пĕр çапăçура 5 дзот ишнĕ, 2 противотанковăй орудии тата 25 гитлеровецца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сержант Подокин юлташ пĕр кун хушшинче нимĕçсен 10 салтакне тата 4 пулеметнăй точкине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сержант Владимир Григоров ирхине ирех тăшманăн минăсем хурса тухнă вырăнпа урлă каçса противникăн оборонин малти хĕрри патне шуса çитнĕ те нимĕçсен позици йышăна выртнă. Часах вăл землянкăран тухнă 3 нимĕçе персе вĕлернĕ. Темиçе сехет хушшинче Григоров юлташ тата 5 гитлеровецца вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Орел облаçĕнчи Устарь ялĕнче пур çынсене те çаратса тухнă, унтан колхозниксен çуртĕсене çунтарса янă. 170 кил çунса кайнă. 20 çынна—хĕрарăмсене, стариксене тата ачасене — гитлерла çынвĕлеренсем, пÿртсене хăваласа кĕртсе, чĕрĕллех çунтарса янă. 63 çынна ял тулашне илсе тухса персе вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем Франципе хресченсенчен çĕнĕ тырра туртса илеççĕ. Франци патриочĕсем тырра, захватчиксене парас мар тесе, пытараççĕ, пытарма май килмесен—пĕтерсе хураççĕ. Энререн инçех мар вырăнта такамсем çĕнĕ тырра шута илекен нимĕç чиновникне тата темиçе салтака вĕлернĕ.

* * *

Июлĕн 5-мĕшĕнче Варшавăн хĕвелтухăç енчи вокзалĕнче нимĕç оккупанчĕсен бензин хунă пысăк склачĕ çунса кайнă. Пушар 5 сехет пынă. Пĕр станцире Польша патриочĕсем гитлеровецсен поездне крушени тунă.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ). И. С. Кочергин сержант ертсе пыракан гвардеец-минометчиксем хăйсен йывăр миномечĕнчен персе 200 гитлеровецца, танксене хирĕç пемелли 2 орудие, тăшман пулемечĕсен 5 точкине тата 2 блиндажа пĕтерсе тăкнă. **Укерчĕк çинче:** Миномет расчечĕ тăшман çине перет.

Ф. КИСЛОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Июлĕн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июлĕн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче тата **Богучар** хулинчен кăнтăртарах вырăнта хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Воронеж районĕнче çапăçусем пĕрре пĕр енĕшĕн, тепре тепĕр енĕшĕн ăнăçлă пулса пĕр тăтăш пыраççĕ. Тăшманăн наступлени тăвакан чаçĕсем питех те пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Хăйсен халсăрланса çитнĕ дивизийĕсем вырăнне нимĕçсен инçетри тылран резервсем илсе килме тивет. Çак кунсенче Францирен тата Бельгирен темиçе дивизи килнине палăртнă. Пĕр участокра пирĕн чаçсем, тăшманăн атакине сирсе ярса, хăйсем атакăна кайнă. Хаяр çапăçу темиçе сехет пынă. Гитлеровецсен 11 танк тата çĕршер салтакпа офицер пĕтсен, вĕсен каялла чакма тивнĕ. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем противникăн темиçе атакине сирсе янă. Артиллерипе бронебойщиксем нимĕçсен 6 танкне çунтарса янă.

* * *

Богучартан кăнтăртарах вырăнта пирĕн чаçсем нимĕçсен наступлени тăвакан войскисене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Пĕр участокра пирĕн пĕр подразделени тăшманăн пехотин пĕр полкне пĕр кун хушши тытса чарса тăнă, вăл 700 нимĕçе ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн виçĕ танк нимĕçсен 5 танкне, 2 противотанковăй орудине тата 30 гитлеровецца ытла пĕтерсе тăкса, пĕр çухатусăрах çапăçуран тухнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн боецсем виçĕ кун хушшинче 2 оруди, 14 пулемет, пулеметсен 15 точкине тата 3 миномет пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, 30 дзотпа землянкăна унта тăнă гитлеровецсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă. Противникăн 400 салтакĕпе офицерĕ ытла пĕтнĕ.

* * *

Противник Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пĕр батальона çити вăйпа наступлени пуçласа янă. Пирĕн подразделенисем нимĕçсен пехотине пĕчĕк шыв урлă каçма май панă, унтан вĕсене çавăрса илнĕ те 200 гитлеровецца пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 3 танкне персе çĕмĕрнĕ, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă, 2 оруди çĕмĕрнĕ тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Рота командирĕ Демешев лейтенант 100 гитлеровецца ытла вĕлернĕ. Хăйĕн ротинче вăл 33 çынна снайпер пулма вĕрентсе çитернĕ, çав снайперсем 396 нимĕç оккупантне стройран кăларнă та ĕнтĕ.

* * *

Красноармеец Николаев юлташ, ручной пулеметран персе, нимĕçсен пикировка тăвакан «Юнкерс—88» йышши бомбардировщикне ÿкернĕ.

* * *

Курск облаçĕнчи партизансен Л. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ ăнăçлăн кĕрешет. Партизансем кĕпере ун тăрăх нимĕç танкĕсем пынă вăхăтра сирпĕнтерсе янă. Икĕ танк çĕмĕрĕлнĕ те шыва ÿкнĕ. Çав отрядри партизансен пĕр ушкăнĕ нимĕçсен автоколонни канма чарăннă ял çине çĕрле пырса тапăннă. Совет патриочĕсем боеприпассем тиенĕ 8 автомашинăна çунтарса янă, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 30 çынна вĕлернĕ.

* * *

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра çапăçакан нимĕç салтакĕсем патне çырнă çырусенче вĕсен тăванĕсем Германире пур çĕрте те тенĕ пекех тырă питĕ начар пуласса кĕтни çинчен çыраççĕ. Нимĕç унтер-офицерне Бетцера унăн ашшĕ Фалькендорфран çапла çырать: «Кăçал тырă питĕ сахал пуласси халех паллă ĕнтĕ. Çавна нумайĕшĕ ĕненесшĕн мар-ха, анчах пирĕн пата выçлăх çывăхарса килни хăех часах паллă пулса тăрĕ».

Нимĕç ефрейторне Августин Фешера Марк Листенауран çапла çыраççĕ: «Ыраш тата урпа пĕтрĕç. Тепĕр хут акмаллаччĕ, анчах та вăрлăй тупма май пулмарĕ. Нумайĕшĕ çавăнпа нимĕн те пăсса акаймарĕç».

* * *

Нимĕçсен фашистла çынçиенĕсем оккупациленĕ совет районĕсенчи мирлĕ халăха пĕтерсе пыраççĕ. Орел облаçĕнчи Лугань ялĕнче гитлеровецсем 20 çынна асапалантарса вĕлернĕ. Сынвĕлеренсем 23 çулти учительницăна Анна Федосеевна Коротченкăна, унăн 2½ çулти ывăлне Вячеслава тата 53 çулти амăшне Пераскева Ивановăна персе вĕлернĕ. Фашистла ирсĕрсем Анна Константиновна Кожанова учительницăна тытса пусмăрланă, унтан ăна унăн 5 çулти ачипе Викторпа тата 7 çулти хĕрĕпе Людмилăпа пĕрле персе вĕлернĕ.

Воронеж районĕнчи çапăçу

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 14-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Дон шывĕн кĕррисенче, уйрăмах та Воронеж районĕнче пыракан питех те вăйлă çапăçу сехетсерен çивĕчленсе пырать. Çапăçакан икĕ енĕ те çапăçăва танксен, самолетсен, пехотăн çĕнĕ те çĕнĕ соединенийĕсене кĕртсе пыраççĕ. Хаяр çапăçусем çĕрле те чарăнмаççĕ. Артиллери пĕр тăтăш кĕрлесе тăрать, çапăçу хирĕ çинче тĕтĕм юписем, пушар çутисем.

Пирĕн орудисем фашистсен колоннисем çине пĕр чарăнмасăр переççĕ, авиаци шыв урлă каçмалли вырăнсем çине тата нимĕçсен боевой техникипе пехоти пухăнса тăнă районсем çине бомбăсем пăрахаççĕ. Ĕнер çĕрле совет летчикĕсем нимĕçсен 10 танкне, пехота ларса пыракан 12 автомашинине тата, темиçе орудипе зенитнăй установкине пĕтерсе тăкнă. Дон шывĕн хĕррисенче фашистсен вут тивертнĕ танкĕсем çунса лараççĕ. Тăшманăн орудийĕсем, миномечĕсем, пулемечĕсем шыва чăмаççĕ, снаряд ванчăкĕсемпе пулеметсен черечĕсем çĕршер гитлеровецца çула-çула пăрахаççĕ. Анчах та урса кайнă тăшмана çак ытла та пысăк çухатусем те чарса тăмаççĕ. Нимĕçсем малаллах талпăнаççĕ. Çĕрле Донăн хĕвелтухăç хĕррине çĕнĕ вăйсем каçарса, фашистсем тул çутăласпа çĕнĕрен тата хаяртарах атакăсем пуçласа янă.

Пĕр вырăнта тăшманăн танкĕсен колонни йышлă самолетсем хÿтĕлесе пынипе пирĕн боецсене каялла чакарма тата хула районне çĕмĕрсе кĕме пултарнă. Вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Совет воинĕсем çĕрĕн кашни пусăмне çирĕп хÿтĕлеççĕ. Нимĕçсен вунпилĕк танкĕсене пирĕн артиллери пĕтерсе тăкнă тата вĕсем противотанковăй минăсем çине пулса сирпĕне-сирпĕне кайнă. Серебряк юлташ комиссар пулса тăракан батарея темиçе сехет хушшинче фашистсен 9 танкне вут тивертнĕ е персе çĕмĕрнĕ. Макаровпа Сишкарев лейтенантсен артиллерисчĕсем хăюллăн çапăçнă. Противник тăвăллăн персе тăнă вăхăтрах вĕсем тăшманăн машинисене пĕтерсе, пехотине аркатса пынă.

Хастарлă командир Павлов çапăçăва ертсе кайнă совет танкисчĕсем фашистсен танкĕсен группине вăйлăн пырса çапнă. Танкистсем нимĕçсене флангсенчен пырса атакăланă, тăшманăн çапăçу йĕрки ăшне кĕрсе кайса, вĕсем пĕр чарăнса тăмасăрах нимĕçсен темиçе машинине çĕмĕрсе тăкнă. Васильев лейтенантăн экипажĕ уйрăмах палăрнă. Вăл гитлеровецсен 2 танкне çĕмĕрнĕ, 3 танкне вут тивертсе янă.

Воронеж районĕнче çапăçусем çивĕчленсе пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар воинĕсем лару-тăру хăрушшине пĕлсе тăрса, хăйсене шеллемесĕр, çирĕп çапăçаççĕ, нимĕçсем хытăрах та хытăрах кĕстернине чарса тăраççĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн войскăсем халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктшăн, нимĕçсем нумаях пулмасть тытса илнĕскершĕн, хаяррăн çапăçаççĕ. Пирĕн чаçсем тăшманран пĕр позици хыççăн теприне тытса илеççĕ, фашистсене шыв çумнелле хĕсеççĕ. Пĕр участокра сасартăк пырса çапнипе нимĕçсем нимĕн йĕркесĕр каялла чакнă, Туллимар даннăйсем тăрăх, гитлеровецсен унта 4 танк, 31 противотанковăй оруди, 11 оруди, 19 миномет, 46 пулемет пĕтнĕ. Çапăçу киренче нимĕçсен 1000 вилли ытла выртса юлнă.

Воронеж районĕнче лару-тăру çаплах çивĕч тăрать-ха. Çапăçусем малалла пыраççĕ.

Г. КРЫЛОВ.

Польша республикин Совет Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ кайни

Июлĕн 13-мĕшĕнче Польша республикин Совет Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ г. С. Т. Кот Куйбышевран тухса кайнă.

Пристань çинче Кот господина çаксем ăсатнă: Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протокольнăй отделĕн заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Европăри ĕçсене пăхакан 4-мĕш отделĕн заведующи помощникĕ В. А. Зорин юлташ, Польша посольствин составĕ Польша ĕçĕсен поверенныйĕпе Х. Сокольницкий господинпа пĕрле, Афганистан посолĕ г. Султан Ахмед Хан, Китай посолĕ г. Шао Ли-Цзы, Великобритани посолĕ г. А. Керр, США посолĕ г. В. Стендли Швеци посланникĕ г. В. Ассарсон, Чехословаки посланникĕ г. З. Фирлингер, Югослави посланникĕ г. С. Симич, Францин нациллĕ комитечĕн представителĕ г. Р. Гарро, Иран ĕçĕсен поверенныйĕ г. А. Этесали, Турци ĕçĕсен поверенныйĕ г. Ф. Зорлу, Греци ĕçĕсен поверенныйĕ г. И. Джирас, Норвеги ĕçĕсен поверенныйĕ г. И. Лунде ăсатнă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли--ăшă тумтирсем

ЕЛЧĔК. (**Телефонпа**). Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç районра анлăн сарăлса кайрĕ. Июлĕн 10-мĕш тĕлне районĕпе 593 тир, 170 килограмм çăм, 12 кĕрĕк пиншак, 50 мăшăр çăм алшиш, 19 мăшăр çăм чăлха, 53 алшăлли пухăнчĕ.

Аслă Елчĕкри Ленин ячĕпе тăракан колхозăн членĕсем 109 тир, 15 алшăлли парчĕç. «Смычка» тата «Марс» колхозсенче çĕршер тир пухăннă.

С. МАКАРОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (**Телефонпа**). Июлĕн 10-мĕш тĕлне районĕпе 174 сурăх тирĕ, 30 пăру тирĕ, 61 килограмм çăм пухнă. Кивĕ Сĕнтĕр ялсоветĕнчи «Искра» колхоз членĕсем 10 килограмм çăм, 16 сурăх тирĕ, 12 пăру тирĕ, «Правда» колхозри колхозниксем — 11 сурăх тирĕ, 10 пăру тирĕ, 9 килограмм çăм, «Красное Сормово» колхоз членĕсем — 3 сурăх тирĕ, 5 килограмм çăм парчĕç. Çичкан ялсоветĕнчи «Игенче» колхозра 18 тир, 14 килограмм çăм пухăннă.

Калас пулать, ăшă тумтирсем пухас ĕç районра çителĕксĕр пулса пырать-ха. Хăшпĕр ялсовечĕсенче ăшă тумтирсем пухас енĕпе ĕçлекен комиссисем хăйсен ĕçне начар туса пыраççĕ. Государствăн ответлă ĕçĕ çине — ăшă тумтирсем пухас ĕç çине çавăн пек çиелтен пăхни пулмалла мар. Ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлатас пулать.

Т. МЫШКИН.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ЭЛĔК. (**Телефонпа**). Районри колхозсенче нумайĕшĕнче Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли ăшă тумтирсем пухма çĕнĕрен тытăнчĕç. Чи малтан Синерти, Орпашри тата Смородинăри колхозниксем ăшă япаласем пухса районри склада леçсе пачĕç. Июлĕн 10-мĕш тĕлне районĕпе 163 сурăх тирĕ, 15 пăру тирĕ, 159 килограмм çăм, 13 мăшăр çăм алшиш, 8 мăшăр чăлха тата 51 алшăлли пухăнчĕ.

С. САПЕРКИН.

Пирĕн земляксем

Фашистсене пĕтĕм чун-чĕререн тарăхни

Ял варĕнче — кăмрăк, кĕл. Йывăç çуртйĕрсене çунатара-çунтара янă, чул çуртсене ишĕлтернĕ. Виçĕмкун çеç çĕленкалтасене — нимĕç фашисчĕсене кунтан хăваласа ячĕç. Тухса кайнă чухне çав ирсĕрсем яла ним юлмиччен çунтарса, ишĕлтерсе пĕтернĕ. Лайăх та илемлĕ ял — халĕ пушхир. Урам варринче çитмĕл çулти старик вилли выртать. Алли-урисене пралукпа явласа çыхнă та, фашистсем ăна вутта пăрахса çунтарнă. Халĕ çеç хăйсен ялне таврăннă колхозниксем старик ÿчĕ умĕнче пуçĕсене тайса тăраççĕ.

Красноармеец Павел Филиппов чи малтанхи хут фронтăн малти линийĕ тăрăх пынă чухне çаксене хăй куçĕпе курнă. Варварсен тискер те ирсĕр ĕçне час-часах аса илет вăл.

— Мурсем пĕр ялпа та хăварман вĕт-ха, чиркĕве те сирпĕнтерсе янă, — калаcа парать вăл.

Инçех мар минăсем ÿке-ÿке шартлатса çурăлаççĕ. Пуç тăррипе пульăсем шăхăрса иртеççĕ. Малтанхи хут çапăçу кирне кĕнĕ, тар шăршине хăнăхман çын çаксене курсан кăшт хăратех ĕнтĕ. Павел Филиппович та хăранă-и тен?!

Анчах фашистла варварсене курайманни нимĕнрен те вăйлă пулнă. Килте ачасем — вĕсен пуласлăхĕшĕн çапăçма килнĕ вăл. Тăван çĕршыва тăшмансенчен тасалма унăн тăванĕсем 4 çын фронта кайнă, вĕçĕнни — Роман лейтенант. Белофиннсене хирĕç çапăçнă чухне вăл 6 тĕлтен аманнă, çавах та винтовкăна алăран яман. Халĕ нимĕç оккупанчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешет. Çаксене аса илет те, Павел Филипповăн хăрани иртсе каять, тăшмана чун-чĕререн курайманни шиклĕхе çĕнтерет.

...Противник контрнаступление хатĕрленнĕ. Çичĕ танк тата вĕсем çине ларнă автоматчиксем, танксен хÿттипе утса пыракан фашистсен стрелокĕсем пирĕн красноармеецсен оборонин малти линийĕ çине тапăннă. Сывхарнăçемĕн çывхарнă вĕсем. Анчах пирĕн боецсемпе командирсем хăраса ÿкмен. Тăшмана чун-чĕререн курайманни хаяррăн кĕрешме вăй-хал панă. Рядовой боец Василий Ветров, тăшманăн танкĕ икçĕр метра яхăн çывхарса çитсен, танксене хирĕç пемелли пăшалран персе янă. Танк вырăнтан та тапранайман. Кун хыççăнах вăл тепĕр танка тĕл тивертсе çунтарса янă.

Çапăçура кашни хăйне тивĕçлĕ паттăррăн кĕрешнĕ. Елчĕк районĕнчи Кармал çынни Павел Филиппович Филиппов, хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле, танксем вĕсем патне çывхарса пынă чухне, окопра çĕр çумне лапчăнса выртнă. Танксем иртсе кайсан, тăшманăн автоматчикĕсемпе стрелокĕсем çине пеме тытăннă.

Филиппов—фронтовик, усал тăшмансене хирĕç хаяррăн çапăçать. Çумрах мина е снаряд ÿксе çурăлать, пуç тăррипе пульăсем шăхăра-шăхăра иртеççĕ. Хăйĕн ĕçне хуть те мĕнле пулсан та лайăх туса пырать.

Миномет расчечĕн виççĕмĕш номерĕ — наводчик минометран тăшман çине перет, Филиппов минăсем илсе пырса тăрать. Ĕç чарăнса тăмасть. Юлашки çапăçура расчет 15 минута хушшинче 53 мина пĕтнĕ. Филиппов çапăçура паттăррине кунта пурте мухтаççĕ,

— Хăрама пĕлмест вăл, тăшман пульлинчен сыхланма пĕлет. Хăйĕн ĕçне юрататъ, кунран-кун хăйĕн пĕлĕвне ÿстерсе пырать, хуть те хăш вăхăтра та наводчик вырăнне тăма пултарать, — тет Филиппов пирки парторг Аганин.

Кĕçĕн политрук Т. МАЙОРОВ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине сӳтсе-яваççĕ

1942 çулти тырпула пухса кĕртме хатĕрленетпĕр

ШАХАСАН, июлĕн 15-мĕш. (Хамăр корр.). ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозăн пур бригадисенче те колхозниксене вулаcа ăнлантарса пачĕç. Çĕршывра нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяр çапăçусем пынă вăхăтра ялхуçалăхĕнчи ĕçсене ăнăçлăн туса ирттерни питех те пысăк выран йышăнать. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксене уборкăна большевикла йĕркелĕхпе туса ирттерме чĕнеççĕ, ăна туса ирттермелли майсене кăтартса параççĕ. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем тырăсене пухса кĕртес ĕçе тата государствăна тырă парас ĕçе большевикла тимлĕхпе туса ирттерме хатĕрленеççĕ.

Колхоз тырпулсене пухса кĕртмелли ĕç планне тĕплĕн шухăшласа тунă. Вăл план тăрăх, колхозниксемпе колхозницăсем пурте тимлĕн ĕçлесе, ыраша 7 кун хушшинче, çуртрисене 8 кун хушшинче вырса пуçтарма палăртнă. Пĕтĕмĕшпе кăçал колхозăн 761 гектар çинчи тырпула пухса кĕртмелле. Тырăсен чылай пайне алăпа вырса пухмалла пулать. Колхоз правленийĕ кăна тĕплĕн шута илнĕ. Ĕç планĕнче кашни бригада, вĕсенчи кашни звено хăш участокра тата мĕн чухлĕ ĕçлемеллине кăтартса панă, колхозниксен вăйне бригадăсемпе звеносене тĕрĕс çирĕплетнĕ. Кашни ĕçлеме пултаракан çынна ĕçе куллен хутшăнтармалла тунă. Звеносемпе бригадăсем халĕ тырă вырма тимлĕн хатĕрленеççĕ. Паянхи куна кĕреплеллĕ 48 çава туса туптатса хунă. Çурласене шăллаççĕ. Ку ĕçре Алексеев, Федоров тата ытти колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Колхозниксем витнĕ итемсене пурне те касса тасатнă, юсанă. Вĕсем пурте çĕнĕ тырра йышăнма хатĕр. Çĕнĕ тырра вырсанах çапма тытăнаççĕ, государствăна 1942 çулти обязательство шучĕпе тырă леçме колхоз 16 колхознике çирĕплетнĕ, тракторсемпе комбайна валли горючи турттарма 8 лаша, комбайн ĕçленĕ çĕрте ĕçлеме 21 лаша, кĕлте турттарма 62 лаша тата авăн çапнă çĕрте ĕçлеме 16 лаша уйăрса çирĕплетнĕ.

Тырпулсене пухса кĕртес, авăн çапас тата ытти ĕçе куллен 308 колхозник хутшăнмалла. Вĕсен ĕçне çăмăллатас тĕлĕшпе тата ĕçĕн тухăçлăхне çĕклес тĕлĕшпе колхоз ачасем валли ясли, колхозниксем валли столовăй организацилет.

Колхоз кăçалхи пуян тырпула тăкаксăр пухса кĕртме хăйĕн пĕтĕм вăйне мобилизацилет. Ĕçе большевикла йĕркелĕхпе туса ирттерсе, колхозниксем хăйсен умĕнчи задачăсене чыслăн пурнăçлама тăрăшаççĕ.

С. ШАДИН.

Тухăçлă тырпула кĕтсе илмĕ

«Çуталла» колхозăн уйхирĕнчи ыраш кăçал районра чи лайăх пулнă ыраш шутланать.

Тулăх тырăсене пухса кĕртме колхоз тимлĕн хатĕрленет. Тырă выракан 4 машинăна тата пĕр лобогрейкăна ĕçе тухма хатĕрлесе лартнă. Вĕсем пурте юсавлă, пайĕсене сĕрнĕ, тасатса сăрланă. Кĕлте тата утă турттарма 48 урапа тата лаша кӳлмелли хатĕрсем юсаса хатĕрленĕ, кашни урапа пуçне тăхăршар метр вĕрен явса хунă. Çурласем кашни çын валлиех çителĕклĕ.

Тырă вырма тухсанах 3—4 кунран авăн çапма пуçлас майпа колхозниксем итемсене тасатнă, тырă сăвăрмалли-сортламалли машинăсене итемсем çине вырнаçтарса лартнă, тырă турттарма 4 ещĕк, 4 рыдван юсанă тата çĕнĕрен тунă.

Тырă вырма тухас умĕн колхозра ачасен яслийĕ ĕçлеме тытăнать.

Колхозниксем ĕçе пур енчен те лайăх хатĕрленсе тухма тăрăшаççĕ. Çакăнпа пĕрлех тырă вырас вăхăт çитиччен колхозри ытти ĕçсене туса çитерме тăрăшаççĕ. Колхоз çак иртнĕ кунсенче 200 гектар çинчи тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатрĕ, сĕртме пусси çине 6.400 лав тислĕк кăларчĕ. Халĕ утă çулса пухас ĕçре тимлĕн ĕçлеççĕ.

Г. МАТВЕЕВ.

Гектартан 17-шер центнер тĕштырă илессишĕн кĕрешеççĕ

КУКЕÇ. Новосибирскпа Алма-Ата облаçĕсенчи колхозсен чĕнĕвĕ çине Шупашкар районĕнчи «Осоавиахим» колхоз членĕсем конкретнăй ĕçсемпе ответлеççĕ. Пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешсе, колхозниксем тырăсене çумкурăксенчен тасатнă, кĕртмеррисем ахмалли вырăна пĕтĕмĕшпех сухаланă. Халĕ колхозниксем уйăхсенчи курăка çулаççĕ, тырăсене пухса кĕме тимлĕн хатĕрленеççĕ.

Колхоз икĕ жнейкăна тата икĕ лобогрейкăна юсаса лартнă, транспорт инвентарĕсене тата ĕç хатĕрĕсене пурне те юсанă, çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хунă. Урапа маçне те ĕç вăхăтне çитмелĕхех илсе хунă. Колхоз пĕрлешӳллĕ столовăй организациленĕ. Вăл стовăй тырă вырнă вăхăтра та кашни кунах ĕçлемелле.

Тырăсем хӳхĕм ӳссе пыни колхозниксене савăнтарать. Вĕсем кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 17-шер центнертан кая мар тĕштырă туса илме шухăшлаççĕ. Куншăн халĕ кашни колхозник, кашни колхозница тăрăшса ĕçлет. Колхоз государствăна чи паха тырă пама тăрăшать. Паянхи куна вăл сĕт-çу, аш-какай, çăм обязательствисене парса татнă.

М. СМЕТАНИН.

„Хĕрлĕ Октябрь“ колхозра

ЭЛĔК. Хирлеппуçĕнчи «Хĕрлĕ Октябрь» колхозра çак кунсенче кашни колхозникех тăрăшса ĕçлет. Колхозăн тимĕрçĕ лаççинче иртен пуçласа мĕн тĕттĕм пуличченех ĕç пырать. Е. Михайлов тата Ф. Михайлов тимĕрçĕсем тырă вырмалли машинăсене юсаççĕ, авăн çапмалли тата тырă тасатмалли машинăсен пайĕсене тăваççĕ.

Ватă колхозник И. Анисимов юлташ урапасем юсать, М. Варфоломеев колхозник çак иртнĕ вăхăтра 115 çава туптаса панă. Колхозник Федор Михайлов хăмăтсем юсать. Вăл çак кунсенче 17 хăмăт çĕнĕрен турĕ, 6 хăмăт, 30 ĕнерчĕк юсаса пачĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем кăçал кашни гектартан вăтам шутпа çĕр пăтран кая мар тырă туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Тырăсене пухса кĕртес ĕçе вĕсем кĕске вăхăтра туса ирттерме хатĕрленеççĕ.

М. КУСТИКОВ.

Çĕнĕ витесем лартрĕç

ИШЛЕЙ, июлĕн 14-мĕш. (Телефонпа). Ярапайкасси ялсоветĕнчи «Красная Чувашия» колхоз чăх-чĕп, сурăх, сысна тата ĕне фермисем валли çĕнĕ витесем туса лартрĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

Чăлха фабрикинчи стахановкăсем

Шупашкарти чăлха фабрики июнь уйăхĕнче производство планне ирттерсе тултарнă. Июль уйăхĕнче малтанхи вунă кунра та фабрика коллективĕ заданине тултарса пынă. Андриянова, Старостина, Попова тата Гашинская стахановкăсем июнь уйăхĕнче нормăна 120—125-шер процент тултарса ĕçленĕ, июль уйăхĕнче вĕсем нормăна 150 процента çити тултарса пыраççĕ.

Стахановка Фадеева юлташ июль уйăхĕнче нормăна 120 процент тултарса пыма обязательство илнĕ. Вăл хăйĕн сăмахне пурнăçа кĕртет. Июлĕн малтанхи кунĕсенче Фадеева юлташ нормăна ирттерсе тултарса пынă, июлĕн 8-мĕшĕнче ĕç нормине 186 процент, июлĕн 9-мĕшĕнче — 191 процент, июлĕн 10-мĕшĕнче — 200 процент ытла тултарнă.

Сип чĕркекен цехри стахановкăсем Виноградовăпа Федорова юлташсем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

М. СМЕТАНИН.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии“ звенине тума

КУКЕÇ, июлĕн 15-мĕш. (Телефонпа). Колхозниксемпе колхозницăсен патриотизмла туйăмĕ иксĕлми вăйлă. Çĕршывра нимĕç фашисчĕсен вăрăхурахла войскисене хирĕç хаяр çапăçусем пынă вăхăтра кашни ĕççынни халĕ хăйне-хăй ĕçре çирĕпрех тытать, тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара вăрçă хирĕнче çĕнтерӳ тума вăйлăн пулăшать.

Самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума районри ĕççыннисем паянхи куна 112.600 тенкĕ укça панă. Вăл укçана колхозниксемпе колхозницăсем, рабочисемпе служащисем Хĕрлĕ Çарăн тĕреклĕхне татах та ӳстерме параççĕ. Заводская ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума 17 пин тенкĕ пухса панă. Колхозăн председателĕ Гаврилов юлташ хăй пĕччен кăна пин тенкĕ панă. Çавăн пекех ытти колхозсенче те колхозниксемпе колхозницăсем ку ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Колхозсем самолетсен звенине тума 4—5-шер пин тенкĕ укça хываççĕ, самолетсен звенине хăвăртрах туса çапăçăва кĕртме ыйтаççĕ.

И. ЛАСТУХИН.

ВСЕВОБУЧ БОЕЦĔСЕМ ÇАР ĔÇНЕ ПĔР-ПĔРИНПЕ ĂМĂРТСА ВĔРЕНЕÇÇĔ

ШАХАСАН. Всевобучăн Энтриялĕнчи вĕренӳ пунктĕнче çак кунсенче боецсемпе командирсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура социализмлă ăмăрту çинчен сӳтсе-яврĕç. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш взводсем çар ĕçне пĕр-пĕринпе ăмăртса вĕренесси çинчен договор турĕç, программăна «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе тухма татăклă обязательствăсем илчĕç.

Çар ĕçне вĕрентнисĕр пуçне, вĕренӳ пунктĕнче хут сахал пĕлекенсене тата хут пĕлменнисене вулама çырма вĕрентме занятисем пулса иртеççĕ, стена хаçачĕсем тата боевой листоксем тухса тăраççĕ.

Боецсем çар ĕçне тĕплĕн вĕренме тăрăшаççĕ. Вĕсем винтовкăран тĕл пеме, гранатăсене тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсене тĕл ывăтма, вăрçăра ăнăçлăн çапăçма вĕренеççĕ.

А. ОРЛОВ.

Всевобуч боецĕсем лагерьте пулчĕç

Всевобучăн Первомайски пунктĕнчи боецсем çар ĕçне лагерьте пулса вĕренчĕç. Лагерь Пинерте пулчĕ. И. Перов, И. Курников, А. Курников, Е. Малякшин, Ф. Чебоксаров, И. Горшков, В. Прощайкин, Н. Осипов, М. Трошкин, П. Ямщиков боецсем вĕренӳре «отлично» паллăсем илчĕç. Çавăнпа пĕрлех боецсем çулĕйĕр тăвас ĕçре те тăрăшса ĕçлерĕç.

П. МАКАРОВ.

Ют çĕршывсенче

Англи бомбардировщикĕсем Рур çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 14-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Рур облаçĕнчи промышленность предприятийĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем нумай тухнă. Англин 5 самолечĕ хăйсен базине таврăнман.

Авиацин эрне хушшинчи çухатăвĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви çапла пĕлтерет: эрне хушшинче, июлĕн 12-мĕшĕнче вĕçленнĕскерĕнче, противникăн Вăтаçĕр тинĕс çинче 116 самолет пĕтнĕ, вăл шутран 75 самолетне Мальта çинче персе ӳкернĕ. Англи авиацийĕн 48 самолет пĕтнĕ.

Противникăн авиацийĕ çав вăхăт хушшинче Англи çинче вăйлăн кĕрешмен. Германи самолечĕсем çыран хĕрринчи районсенчен шалалла кĕме пултарайман. Çав операцисенче нимĕçсен 6 бомбардировщикĕ пĕтнĕ, Англи авиацийĕн çухату пулман.

Çанталăк начар тăнă пирки Англи авиацийĕ Германи çине тата вăл оккупациленĕ территорисем çине вĕçсе пырса тапăнасси пăртак чакнă. Анчах çапах та çав эрне хушшинче икĕ хутчен йышлăн вĕçсе кайса тапăннă.

Египетри фронтра

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Роммель халь хăйĕн бронетанковăй вăйĕсене пĕр çĕрелле пухать, хальрен халь вăйлă çапăçу пуçланса кайма пултарать.

Англин куçса çӳрекен çăмăл отрячĕсем противника тăтăшах атакăлаççĕ. Çапăçусем пыракан вырăнта ларутăру çивĕчленсе кайнă.

Англин тинĕс-çар вăйĕсем Мерса-Матруха вăйлăн пенĕ. Англи авиацийĕ Тобрук çине вĕçсе пырса вăйлăн тапăннă.

Канада войскисен Англире тунă маневрĕсем

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Канадăн ударнăй чаçĕсем Англин тинĕс-çар тата сывлăш-çар вăйĕсемпе пĕрле десант антармалли маневр туса ирттернĕ, çав маневр вăл Европăри тинĕссем çинче халиччен пулнă маневрсенчен чи пысăкки пулса тăрать.

Вăл маневрсем темиçе эрне пынă. Маневрсем вăхăтĕнче йышлă пехотăпа бронетанковăй вăйсене çĕр çине антармалли темиçе операци пулса иртнĕ. Çав маневрсене Америкăн офицерĕсем те хутшăннă. Америкăн тинĕс-çарти тата çарти аслă офицерĕсем çав маневрсенче пăхса сăнаса тăракансен шучĕпе пулнă.

Америка войскисем Канадăра

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Канадиэн пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Канада Америкăн войскисене Канадăра тăма ирĕк панă. Америка çарĕн хăшпĕр чаçĕсем Канадăна пынă ĕнтĕ. Кирлĕ пулсан унта тата урăх подразделенисем те яраççĕ.

Кунта сăмах Америкăн çарти инженерла чаçĕсем çинчен пырать пулмалла, çав чаçсем Канадăн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче Аляскăна каймалли автострада тăваççĕ.

Венгрире нумай çынна арестленĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Будапештра иртнĕ эрнере Венгри çарĕн 300 офицерĕпе унтер-офицерне ытла тытса хупнă; вĕсене Югославипе Польша партизанĕсене хĕçпăшал тăратакан вăрттăн организацире тăраççĕ, тесе айăпланă.

Оккупантсене канăç çук, пулас та çук

Оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсем захватчиксене хирĕç кĕрешни

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Югослави партизанĕсем нимĕçсемпе итальянецсене хирĕç çĕнĕрен анлă наступлени пуçласа янă. Партизансемпе кĕрешме Италин иккĕмĕш çарне пĕтĕмпех янă. Итали командованийĕ хăйĕн юлашки вăхăтра кăларнă коммюникисенче итальянецсем пысăк çухатусем тӳснине, партизансен движенине пусарса лартма пултарайманнине йышăнать. Нумай пулмасть пулса иртнĕ çапăçусенче итальянецсен 3.000 çын ытла пĕтнĕ. Нимĕçсен карательнăй отрячĕсем те пысăк çухатусем тӳснĕ пулĕ тесе шухăшлаççĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: нимĕçсем Голландире нумай заложник тытса хупнă, Германие хирĕç саботажла ĕçсем чарăнмасассăн çав заложниксене асаплантарса вĕлерессипе хăратаççĕ. Çавăн пекех тата Бельгипе Çурçĕр Францире те нумай заложник тытса хупнă.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Уден хулинче (Па-де-Кале департаментĕнче) халăхпа полици хушшинче тытăçу пулса иртнĕ. Полици çимĕç запасне, вутлă хĕçпăшал тата взрыв тăвакан япаласем шыраса пĕр çурта пырса тапăннă.

Франци патриочĕсем Бетюнпа Булонь районĕсенче телефонпа чугунçул çыхăнăвĕсене татнă. Оккупациллĕ влаçсем Лилль районĕнче, саботаж тунă тесе айăпласа, 50 çынна тытса хупнă.

Оккупациленĕ совет районĕсенчи гитлерла террор

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, оккупациленĕ совет районĕсенче Германи влаçĕсем çакăн пек приказ кăларнă; çав приказ тăрăх, полицие пырса çырăнман çынсене пурне те асаплантарса вĕлермелле; çавăн пекех тата тыткăнран тарнă çынсене тата вĕсене хӳтлĕх, тумтир е мĕнле те пулсан урăх тĕрлĕ пулăшу паракансене те асаплантарса вĕлермелле.

Германин Францири концентрациллĕ лагерĕнчен тарни

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 13-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: фашизма хирĕç кĕрешекен 16 çын Германин Компьен çывăхĕнчи Руальери концентрациллĕ лагерĕнчен тарнă. Вĕсем унтан июлĕн 8-мĕшĕнче казармăсен айĕпе 45 ярд тăршшĕ чавнă тоннель витĕр тухса тарнă.

Гитлеровецсен Францире тунă тискер ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Парижра Германи полицийĕн начальникĕн халиччен нихăçан пулман пек хаяр приказне пичетлесе кăларнă. Кӳрентернĕ тата саботажла ĕçсем тунă тесе шухăшлакан французсене 10 кун хушшинче тупса памасассăн, çав французсен пур тăванĕсене те хаярран тыткалаççĕ. 18 çултан иртнĕ арçынсене персе вĕлереççĕ, хĕрарăмсене каторгăллă ĕçе яраççĕ, 18 çула çитмен ачасене исправительнăй çуртсене яраççĕ.

Итальянецсем албанецсен ялĕсене пĕтереççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, итальянецсем партизансене тавăрас шутпа албанецсен 3 ялне пĕр систермесĕрех пĕтерсе тăкнă. Çав виçĕ ялтан пĕри Албани партизанĕсене ертсе пыракан полковник Байрактари çуралнă ял пулнă.

БОЛГАРИ ХРЕСЧЕНĔСЕНЕ ÇАРАТАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, июлĕн 13-мĕш. (ТАСС). Болгари министрĕсен совечĕ постановлени кăларнă. Çав постановлени тăрăх хресчен хуçалăхĕсене çĕнĕ тырпулран хăйсене валли кашни çын пуçне куннe 400-шер грамм кăна тĕштырă хăварма ирĕк панă. Учительсемпе учительницăсене çуллахи каникул вăхăтĕнче мобилизацилесе «продэкспорт» дирекцийĕн (Германие продовольстви турттарса каяс тĕлĕшпе ĕçлекен организаци) аллине параççĕ. Вĕсен авăн çапнă çĕрте контролерсен ĕçне тата тырпула турттса илнĕ çĕрте агентсен ĕçне туса пымалла пулать.

Румынипе Венгри чиккинче пулнă пысăк çапăçу

ЖЕНЕВА, июлĕн 14-мĕш. (ТАСС). Ютçĕршывсен кунта пурăнакан çыннисем çакна пĕлнĕ: темиçе кун каялла Румынипе Венгри хушшинчи чикĕре Румынипе Венгри войскисем вăйлăн тытăçса илнĕ. Румынин чикĕри салтакĕсен пысăк отрячĕ Венгри территорийĕ çине кĕрсе кайнă. Венгрин чикĕре тăракан чаçĕсем вĕсене хирĕç тăрсан, Румыни енчен артиллерирен пеме тытăннă. Венгрин чикĕри чаçĕсем (вĕсене пулăшма пĕр пехотнăй дивизи янă пулнă) хастарлăн çапăçса, румынсене хăйсен çĕрĕ çине хăваласа янă.

Раджагопалачария Индин нациллĕ конгресĕнчен тухнă

ЛОНДОН, июлĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Мадрасăн премьер-министрĕ пулнă Раджагопалачария Индин нациллĕ конгресĕнчен тата Мадрасри законодательнăй собранирен тухма шут тытнă. Вăл Индири мусульмансен лигипе конгреса пĕр-пĕринпе килĕштермешкĕн ирĕклĕрех условисенче кампани пуçласа яма пултăр тесе тухнă; мусульмансен лигипе конгресс пĕр-пĕринпе килĕшсе татăлсассăн, нациллĕ правительство тума пулать.

Англире советсен „Валерий Чкалов“ ятлă фильмне юратса пăхаççĕ

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕш. (ТАСС). Лондонри киносенче советсен «Валерий Чкалов» ятлă фильмне пуçласа кăтартаççĕ, фильма çынсем питĕ юратса пăхаççĕ. Вырсарникун тухакан хаçатсенче нумайĕшĕнче кино рецензенчĕсем фильма мухтаса çыраççĕ. «Санди экспресс» хаçат çапла çырать: «Вăл вырăссен аслă летчикĕн Чкаловăн пурнăçĕ çинчен питĕ лайăх каласа парать. Ку фильм советсен Англире кăтартнă чи лайăх фильмĕсенчен пĕри пулса тăрать», тет. «Рейнольдс ньюс» хаçат çапла çырать: «Валерий Чкалов» ятлă фильмра çĕнĕ аслă Российăн тата вырăс халăхĕн пурнăçне тĕрĕс кăтартнă. Режиссерсен ĕçне Совет Союзĕнчи кино историйĕнчи чи ăнăçлă ĕçсен шутне кĕртме пулать», тет.

КĔСКЕН

Июлĕн 5-мĕшĕнче Мексика самолечĕсем Тампикăран 25 миля çурçĕртерех вырăнта фашистсен подводнăй лодкине атакăланă, ăна путарнă та пуль.

* * *

Германин Германие яма рабочисем пухакан комиссийĕ çапла каланă: французсен 10.000 железнодорожникне Германие ĕçлеме кайма сĕннĕччĕ, вĕсенчен 10-шĕ çеç Германие кайма килĕшрĕç.

* * *

Норвегире гитлеровецсем шкулсене, больницăсене тата уйрăм çынсен çурчĕсене госпитальсем валли турпса илеççĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Пĕчĕк фельетон

Шăл пухакансем

Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем пирĕн çине кашнинех вăрă-хурахла ĕмĕтпе килнĕ. Совет халăхне чураланытарас, вĕлерсе пĕтерес, унăн пурлăхне туртса илес, çаратас, аркатас, çунтарас, — çакăн пек вĕсен шухăшĕ. Кашни утăмрах вĕсен çак ĕмĕчĕпе шухăшĕ малта тăрать, вĕсене ертсе пырать, унсăрăн фашистсем пĕр утăм та ярса пусаймаççĕ.

Çавăн пек ĕнтĕ фашистла закон!

Нимĕç фашисчĕсен çавтери ирсĕр ĕçĕсене курсан, тĕлĕнсе, пĕтĕм чунчĕререн тарăхса каятăн. Фашист, — мĕнтери вăл усал, сĕмсĕр, тискер, выççă куçлă, мĕнтери вăл ирсĕр, çăткăн.. Çак юнĕçенсем, урнă кашкăрла хаяр пырсем тасçанах этем сăнне çухатнă. Вĕсене этем теме те хал çитмест: йытă тесен — йытă çилленĕ, кашкăр тесен — кашкăр тарăхĕ, çăхан тесен—çăхан килĕшмĕ, выçă пыйтă, чир пыйти тесен — вăл та пулин хирĕç тăрĕ...

Çавăн пек ĕнтĕ фашистсен ăшчикĕ, сăн-сăпачĕ!

• • •

Фельетона «Шăл пухакансем» тесе ят патăмăр. Ан тĕлĕнĕр! Фашистсем хушшинче тем тĕрлĕ вăрă-хурах та пур. Хăшĕсем пирĕн çĕршыва, ытти ирсĕр шухăшсемсĕр пуçне, шăл пухас ĕмĕтпе шухăшпа та килнĕ. Камăн шăлĕ ылттăн е кĕмĕл — çав çынсене вĕлереççĕ те шăлĕсене кăларса илеççĕ вĕсем.

Ĕненме хĕн пек. Анчах фашист тенине аса илсен — вĕсем ун пек ĕçсем тунине, тăвассине çăмăллăнах ĕненетĕн. Фашист, гитлеровец, темĕнле юнлă ĕç тума та хатĕр, вăл, чăвашсем пек каласан, йĕп çăрти чухлĕ, чĕрне хури чухлĕ пурлăхшăн та темиçе çĕр çынна вĕлерме хатĕр.

...Красноармеец Седовпа старшина Сушко нимĕç ефрейторне Карл Мейера тыткăна илнĕ. Ăна вĕсем ухтарнă та унăн хĕвĕнче тимĕр коробка тупнă. Çав коробкăра вуншар шăл — ылттăн, платина шăлсем пулнă. Вилнĕ, аманнă красноармеецсен çăварĕсенчен кăларакăлара илнĕ вĕсене Карл Мейер.

— Аманнисене те илтĕн-и? Мĕнле-ха апла?.. — ыйтнă ефрейтортан.

— Камăн ылттăн шăл, эпĕ вĕсене çĕçĕпе чиксе пăрахрăм, шăлĕсене тăпăлтарса илтĕм... — ответленĕ бандит.

...Винница облаçĕнче партизансем нимĕçсен карательнăй отрядне пĕтерсе тăкнă. Партизансем пĕр вилнĕ фашистăн кутамккинче хутаç тупнă. Çав хутаçра 120 ылттăн, платина шăл пулнă. Унăн кĕсьинче тата Германирен килнĕ çырусем хушшинчен тĕлĕнмелле çыру сиксе тухнă.

Çырура шăл тухтăрĕ çырать:

«Хисеплĕ Шульц, эсĕ янă посылкăна илтĕм. Украина çыннисем — тĕлĕнмелле выльăхсем. Вĕсем, тен халиччен ылттăн хакне чухласа илеймеççĕ. Эсĕ çак шăлсене хресченсенчен илнине ĕненме йывăр. Вĕсен лапăрчăк çăварĕсенчен çав хаклă метала нумайрах тăпăлтарса ил».

Вилнĕ фашистăн хутаççинче 120 шăл. Анчах та вăл хăйĕн çак çырура асăннă посылкине тахçанах Берлина янă. Миçе шăл янине эпир пĕлместпĕр. Çакă çеç паллă: шăл пухакан нимĕç мĕн вăрçă пуçланнăранпах çак ĕçе туса пынă, анчах та, юлашкинчен, пухнă шăлсене вăл тухтăр патне, Берлина, ярайман, пирĕн паттăр красноармеецсем ăна хăйне шăлран панă.

Пирĕн сăмах кĕске: фашистсем пирĕн пата ылттăн шăлсем пухма, пире çаратма, вĕлерме килчĕç пулсан — эпир çав ирсĕр вăрă-хурахсене 1942 çулта тĕппипех пĕтерсе хурăпăр.

В. ДОЛГОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

ЧУВАШМЕДСНАБУ

требуются на постоянную работу: ответственный исполнитель, планоик-экономист, зав. складом и два сторожа.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Ленина, дом № 7.

2—1.

ТРЕБУЕТСЯ:

на постоянную работу ст. инспектор, бухгалтер-ревизор, статистик-экономист, машинистка, делопроизводитель, ротаторщик-экспедитор. Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, улица Набережная реки Волги, дом № 13, Уполнаркомзаг СССР по Чувашской АССР. Отдел кадров.

3—1.

ТРЕБУЕТСЯ НА ПОСТОЯННУЮ РАБОТУ В ЧЕБОКСАРАХ:

начальник планового отдела, опытный статистик, бухгалтер-ревизор.

В районы: ст. бухгалтер маслосырзаводов. Оплата по соглашению.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. 2-я Герцена, 32, Трест маслопрома.

3—1.

ЧЕБОКСАРСКИЙ КОММУНАЛЬНО-СТРОИТЕЛЬНЫЙ ТЕХНИКУМ

Об'являет прием студентов на 1942—43 учебный год.

Техникум готовит техников-строителей по промышленному и гражданскому строительству. Срок обучения 3 года. Принимаются лица обоего пола от 15 до 30 лет, с отрывом от производства. К заявлению должны быть приложены следующие документы: автобиография, свидетельство об окончании НСШ (в подлиннике), три фотокарточки (снимок без головного убора), свидетельство о рождении, справка о здоровье, паспорт предъявляется при личной явке.

На 1 курс техникума принимаются без испытаний окончившие НСШ, 8 и 9 классы средней школы в 1941 и 1942 годах. Без испытаний принимаются также демобилизованные из рядов РККА и инвалиды отечественной войны, имеющие подготовку не ниже 7 классов НСШ, независимо от времени окончания ее.

На II курс принимаются без испытаний окончившие полную среднюю школу (рабфак, вечернюю полную среднюю школу), с условием обязательной сдачи в течение первого семестра общетехнических и специальных дисциплин, пройденных на первом курсе.

На III курс без испытаний принимаются лица, окончившие II курс в 1942 году строительный, машино-строительный и железнодорожный техникумы, а неокончившие их — с испытанием. Отличники средней школы и НСШ с 1-го сентября зачисляются на стипендию. Принятые в техникум общежитием и столовой не обеспечиваются. Плата за обучение в техникуме 150 рублей в год, вносится равными долями в два срока. Дети пенсионеров и военнослужащих рядового и младшего начальствующего состава освобождаются от уплаты за обучение.

Начало занятий 1-го сентября.

Заявления направлять по адресу: г. Чебксары, Чувашской АССР, ул. Новая, 22, Чебоксарский Коммунально-Строительный техникум, Для ответов должны быть вложены в конверт почтовые марки на 60 коп.

Прием заявлений до 10-го августа 1942 года.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ. 1302. Типография №1 Управления ... промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 43 34 п. л.